***Юмахри çул çӳрев***

*Е.Ю.ИВАНОВА, Элĕк районĕнчи Элĕкри «Çăлкуç» ача сачĕн музыка ертӳçи.*

(Аслă ушкăнри ачасемпе ирттернĕ заняти)

Тĕллевсем: музыка хайлавне итлеме тата ăнланма хăнăхтарасси, юрă-кĕвĕпе пултарулăха аталантарасси, театр пултарулăхĕпе ӳнер тĕнчине юратма вĕрентесси.

Заняти юхăмĕ:

*Ачасем музыка залне шахмат йĕркипе кĕреççĕ. М.Протасов кĕвĕленĕ «Салам, салам, сап-салам» юрă янăрать.*

Музыка ертӳçи: Ачасем, эпĕ эсир юмахсем юратнине лайăх пĕлетĕп. Мĕнле юмахсене кăмăллатăр-ха эсир? (Ачасем хуравлаççĕ). Эпĕ халĕ сире юмахри асамлă чечеке ӳстерме сĕнетĕп. Ачасем, ăна мĕнле ӳстермелле-ши? (Ачасем хуравлаççĕ). Тĕрĕс, вăрăран. Чечек ӳстĕр тесен мĕн тумалла-ши? (Ачасем хуравлаççĕ). Халĕ эпир вăрра çĕр çине лартатпăр та ăна шăваратпăр, вара асамлă чечек шăтс ата тухĕ. Халĕ аллăрсене хатĕрлĕр, эпĕ сире асамлă чечекĕн вăррисене валеçсе паратăп. Шухăшласа пăхăр-ха, илемлĕ чечексем шăтса тухччăр тесе мĕн тумалла-ши?

*«Асамлă чечек ӳстеретпĕр» хăнăхтару. (Е.Железнова кĕвви).*

Педагог кашни ачана вăрă валеçсе парать. Илемлĕ кĕвĕ янăрать. Ачасем чечек лртнă евĕр хусканусем тăваççĕ: шăтăк тăваççĕ, унта вăрă хураççĕ, шăвараççĕ. Чечек «ӳсме» тытăнать, ачасем чечек çеçке çурнине сăнарлаççĕ. Педагог кашни ача хыçне çаврашкасем хурать.

Музыка ертӳçи: Еплерех илемлĕ чечексем шăтса тухрĕç. Вĕсенчен еплерех тутлă шăршă кĕрет. Ачасем, хăвăрăн чечекĕрсене шăршласа пăхăр-ха. Камăн çаврашкасем сарă тĕслĕ? Кунталла килĕр. Эсир мĕнле чечексем пулатăр?

Ачасем: Эпир сар чечексем пулăпăр.

Музыка ертӳçи: Акă сирĕн уçланкă кунта пулĕ. Мĕнле чечекĕн çаврашкасем шурă тĕслĕ?

Ачасем: Салтак тӳмин.

Музыка ертӳçи: Маттурсем. Камăн çаврашкасем кăвак тĕслĕ? Вĕсем шăнкăрав курăкĕ пулаççĕ.

Ачасем ушкăнсемпе пайланаççĕ.

Музыка ертӳçи: Халĕ вара кашниех алă çупса хăвăрăн чечек ятне юрлăр.

Ачасем: Эпĕ – сар чечек,

Эпĕ – салтак тӳми,

Эпĕ – шăнкăрав курăкĕ.

Музыка ертӳçи: Ачасем, пăхăр-ха, кашни чечек çинче юмахри Дюймовочка пурăнать. Вăл çывăрнă вăхăтра сăпка юрри юрлар пулĕ.

«Дюймовочкăн сăпка юрри» хăнăхтару (Е.Тиличеева кĕвĕленĕ юрă янăрать).

*Ачасем хăнăхтарусем тăваççĕ.*

Музыка ертӳçи: Ачасем, Дюймовочкăна вăратар-и? Çакна валли пирĕн савăнăçлă шăнкăрав пур. Ун сассипе вăл вăранĕ.

*«Савăнăçлă шăнкăрав» кĕвĕ янăрать. Ачасем шăнăкăравсемпе шăнкăртатаççĕ.*

Музыка ертӳçи: Дюймовочкăпа пĕрле унăн юлташĕсемпатне кайăпăр-и? (Ачасем хуравлаççĕ).

*«Савăнăçлă çул çӳрев» хăнăхтару. (Е.Зарицкая кĕвĕленĕ юрă янăрать).*

Ачасем хăнăхтарусем пурнăçлаççĕ: кăткăсене чăрмантарас мар тесе асăрхануллă утаççĕ, умĕнчи юхан шыв урлă каçма авкаланчăк çулпа чупаççĕ, йывăç тураттисем айĕпе утнă пек тăваççĕ.

Музыка ертӳçи: Сирĕн çулăр вăрăм та йывăр пулчĕ. Халĕ ларса канар пулĕ, вăрманти кĕвве итлесе пăхар, вăрманта пурăнакан чĕрчунсене сăнар. Акă, пăхăр-ха, мĕнлерех тăрăшуллă эрешмен кунта.

*«Эрешмен» хăнăхтару. (Е.Железнова кĕвĕленĕ юрă янăрать).*

Ачасем авкаланчăк çулпа утса эрешмен карти тăваççĕ.

Музыка ертӳçи: Маттурсем. Таçта нăрă вĕçни илтĕнет. Вăл мĕнле сасă кăларать?

*Ачасем «ж» сасă кăларса зал тăрăх чупаççĕ.*

Музыка етрӳçи: Нăрă сире пурне те ташша чĕнет.

«Савăнăçлă полька» кĕвĕ янăрать.

Музыка ертӳçи: Сире юмахпа çул çӳрев килĕшрĕç-и? (Ачасем хуравлаççĕ). Сире мĕн ытларах килĕшрĕ? (Пĕтĕмлетӳ тăваççĕ).